## Чăваш АССРĕн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Государство премине илме тăратнă

# ХАЛĂХ ЧУННЕ ĂНЛАНСА

Чăваш АССР тава тивĕçлĕ художникĕ Владимир Иванович Агеев 200 кĕнеке валли пилĕк пин ытла тĕрлĕ ӳкерчĕк тунă. Унсăр пуçне унăн картинисене республикăри 25 тата урăх çĕрти 15 выставкăра кăтартнă.

Вăл илемлетнĕ кĕнекесем çĕршыври, тĕнчери выставкăсенче премисем илме тивĕç пулнă. Художник мĕн тунипе тата пуррипе çырлахмасть. Вăл мал ĕмĕтлĕ, яланах çĕннине шырать те ăсталать.

Пуриншĕн те паллă ĕнтĕ, Владимир Агеевăн пултарулăхĕ тĕрлĕ енлĕ. Унăн алли витĕр тухнă чи нумай ĕçрен малтан кĕнеке графикине аса илмелле. Вăл нихçан та содержание кăна пăхăнса ĕçлемест, текста тĕплĕ тишкерет, автора ăнланма тăрăшать, çав вăхăтрах хăйĕн творчество позицийĕнчен чакмасть. Вăл илемлетнĕ кĕнекесем сăвăпа юрра хывнă кĕвĕ пек пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă, килĕшӳллĕ. Ун алли илемлетнĕ кĕнекесем яланах хăйеверлĕ, никамăнни пек те мар. Иллюстраци пĕчĕкçĕ ӳкерчĕк çеç, анчах питĕ кăткăс ĕç. Вăл — чăн-чăн искусство произведенийĕ. Çакна тĕпе хурать те художник.

Художникăн кашни ĕçĕнче этнографиллĕ-конкретлă, çав вăхăтрах философиллĕ анлă пĕлтерĕшлĕ палăрăмсем тупма пулать — вĕсем унăн творчествинче уйрăлми тачă çыхăннă. Юмахсенчи аллегориллĕ сăнарсене те эпир хамăра çывăх, тахçан палланă пек йышăнатпăр. Мĕншĕн тесен, вĕсем пурте халăх шухăшлавĕ-ăнланăвĕнчен килеççĕ, çавăнпа та пирĕн ăс-хакăлăн пĕр пайĕ пулса тăраççĕ. Ахальтен мар графика ĕçĕсен ярăмĕсене вăл «философиллĕ япаласем», тет. Вĕсем хушшинче «Чунсăр тĕнче», «Шăпа», «Аманнисем», «Юрату», «Чăваш ăсчахчĕсем» ярăмри листасем. Чылайăшĕ пĕр выставкăра та пулман-ха. Вĕсенче художник ĕмĕртен-ĕмĕре кашни çынна пăлхантаракан пурнăçпа вилĕм, ырăпа усал, юратупа курайманлăх, илемпе сăнсăрлăх пĕр-пĕринпе кĕрешнине уçса парать, анчах кашни ӳкерчĕкрех ăна кăна тивĕçлĕ йĕрсемпе сăрсем куратăн.

Владимир Агеев график кăна мар, вăл кисçтĕке те алăран ямасть. Искусствăна юратакансем унăн çуллă сăрăпа ӳкернĕ «Хăмла пухни», «Елчĕк пасарĕ» картинисене аван пĕлеççĕ. Юлашки вăхăтра художник истори жанрĕ патне туртăнма пуçларĕ.

«Атăлçи пăлхарсем Аслă Таяпа хулашĕнче» картина пире сĕм авалласа, 1237 çула илсе çитерет. Тин кăна хулашри хӳтĕлевçĕсем тутар-монгол эшкерĕ тапăннине сирсе янă. Тавралăха каç сăнĕ çапнă, кар хӳми çине хĕвелĕн юлашки шевли ӳкнĕ, пушар та сӳнсе пĕтмен-ха. Халăх вылĕăхчĕрлĕхпе, ачапчапа хулана каялла таврăнать. Анчах çар çыннисен çирĕп сăнпичĕсене курсан хăрушлăх яланлăхах иртменнине туйса илетпĕр. Сенкер-кăвак колоритлă картина аваллăхăн пĕр самантне анчах çутатса парсан та, эпир пирĕн несĕлсем ирĕклĕхе мĕн тери юратнине, хуть те мĕнле тăшмана та хирĕç тăма хатĕррине куратпăр.

Тепĕр ĕç — «Чăваш юланутçисем Пугачев çарĕнче». Кунта автор хĕрӳ çапăçу самантне сăнласа парать. Чăвашпа вырăс халăхĕсем ирĕклĕхшĕн, патша пусмăрне хирĕç мĕнле кĕрешнине кăтартать вăл кунта. Художник историе çине тăрса тĕпчет, тĕрлĕ вăхăтри тумтире, хĕçпăшала аван пĕлет. Çакă ăна историллĕ событисене тĕрĕс сăнлама, чăнлăха тĕпе хурса ĕçлеме май парать.

Мольберт çинче вĕçленмен ĕç — «Тĕрлемес патĕнчи çапăçу». Граждан вăрçин пĕр кунĕ, шуррисемпе çапăçнă вăхăтра пулнă пĕр трагеди... Туса пĕтермен ĕçре художник уйрăмах материалпа пĕлсе, васкамасăр, тĕплĕ ĕçлени сисĕнет.

Юлашкинчен çакна палăртас килет: кирек мĕнле ĕçе илсен те — карикатура-и, кĕнеке графики е жанрлă картина, юмахла аллегориллĕ япала-и е чăн пулни — пурте вĕсем пурнăç чăнлăхĕпе е, урăхла каласан, тарăн реализмпа палăрса тăраççĕ. Художник кашни кун, ирĕн-каçăн ĕçре. Часах Мускаври «Вырăсла-чăвашла словарь» пичетленсе тухмалла, унта В. Агеев ӳкернĕ 200 яхăн иллюстраци пулать.

Чăваш АССР тава тивĕçлĕ художникĕ Владимир Иванович Агеев илемлетнĕ М. Федоровăн «Арçури», К. Ивановăн «Килчĕ ыра çуркунне», «Чăваш легендисемпе юмахĕсем», А. Трофимовăн «Çыруллă кĕпе», Уйăп Мишшин «Ача чухне», «Вырăс чĕлхин кĕнеки», А. Гринăн «Хĕрлĕ парăс» кĕнекисене Чăваш АССРĕн К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен государство премине илме тăратнă. Вăл пире малашне те хăйĕн ексĕлми пултарулăхĕпе савăнтарасса çирĕп шанас килет.

**В. СИДОРОВ.**